# ĂСĂМ

## ПАТТĂР ТА ÇЕПĔÇ ЧУН

1950-мĕш çулсенче тăван поэзире хĕрарăм-сăвăçсен йышĕ калама çук пĕчĕкчĕ, çакă питĕ пăшăрхантаратчĕ. Вулакан Трубина Марфипе хăш-пĕр сайра хутра çыркаланă хĕрарăмсен сăввисене çеç кăшт-кашт пĕлетчĕ. Унтанпа Ваççа Аниççин хăюллă публицистикипе, Мария Волкован çепĕç лирикипе паллашрăмăр. 1970-мĕш çулсенче пирĕн поэтессăсен йышĕ хăвăрт ӳсрĕ. Акă Раиса Сарпин хĕрӳллĕ сассипе Любовь Мартьянован шухăшлă сăмахĕ хыттăнах илтĕнсе тăма пуçларĕ. Вĕсенчен юлмасăр утма пикенекен те сахал мар. Ĕнтĕ хамăр поэзири хĕрарăмсен пултарулăхĕ уйрăм антологи кăлармалăх та пухăнчĕ. Çак илемлĕх пултарулăхĕн çӳпçинче Ираида Петрова тӳпи те курăмлă, сулăмлă.

Ираида Алексеевна Петрова 1913 çулхи мартăн 16/29/-мĕшĕнче хальхи Пушкăртстанăн Пишӳлек районĕнчи Йăлпăлакра учитель кил-йышĕнче çуралнă. Тепĕр çулхинех вăрçăран чирлесе таврăннă ашшĕ вилсе каять. Çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн пулас çыравçă Хусан педтехникумне вĕренме кĕрет. Хулари концертсенче вăл халăх юррисем юрлать, ăна радиопа юрлама та чĕнеççĕ. Юрăçă ăсталăхне алла илес ĕмĕтпе И. Петрова Шупашкара килет, театр çумĕнчи студие çӳреме пуçлать, çав хушăрах театрта та ĕçлет. 1930 çулта театр искусствин Тĕп техникумне вĕренме кĕрет, тепĕр икĕ çултан ăна кунти консерватори çумĕнчи опера студине илеççĕ. 1941 çулта Ленинградри консерватори çумĕнчи музучилищĕрен вĕренсе тухать. Вăл Мускавра, Хусанта, Ленинградра юрланă. Вăрçă пуçлансан, эвакуаципе Оренбурга çитет, авиазаводра ĕçлет, пĕр хушă кунти юрă ансамбльне ертсе пырать.

1947 çултанпа вăл Мускав облаçĕнчи Калининградра пурăнать, унти Культура çурчĕ çумĕнчи литпĕрлешĕве çӳрет. 1974 çулта ăна шалкăм çапать. Йывăр чирлет пулин те, поэтесса литература ĕçне пăрахмасть. 1980 çултанпа вăл — СССР çыравçисен Союзĕн членĕ. И. Петрова 1983 çулта вилнĕ, унăн кĕлне Шупашкар масарне пытарнă.

Сăмах ăсти ĕçне епле иленни çинчен И. Петрова «Ман асăмри Митта» асаилӳре хăех çырса кăтартнă:

«Эп ачаран юрлаттăм, — тет вăл унта. — Сассăма та мухтатчĕç. Ытти халăха хамăр тăван юрăпа паллаштарăп, тăван халăхăма юрăпа савăнтарăп теттĕм. Вĕренсе пĕтерсе пыратăп. Пĕтертĕм те... ак ман сасă пĕтсе ларчĕ. Сассăм... çук.

Пĕр хуйхă хăй хыççăн теприне сĕтĕрет. Ак çак вăхăтра мана тăван чĕлхе пурнăç тăприне тымар яма пулăшрĕ. Эп пурнакан çĕрте чăваш çук. Чăвашла каласас вырăнне эпĕ, сассăр юрăçă, сассăр юрлатăп, асăмра.

Хуллен-хуллен хам шухăшăма хам сăмахăмпа каласшăн пулнине, «сăвă» тейĕпĕр, çыра пуçларăм. Ку ĕç ман çунса кăварланнă чунăма лăплантара пуçларĕ. Вара эпĕ Шупашкара пытăм. «Сăввăмсене» кăтартма.

Ман шухăшра ку çакăн пек: эпĕ кĕрлен-шавлан тинĕс авăрĕнче. Мана çăлма пыма кимми те çук, çанталăкĕ те тинĕсе тухма памасть. Митта мана: «Хăвах ишсе тухатăн: хăвна ху çăлмасан, сана никам та çăлаймĕ», — тенĕ пек туйăнать. Вăл мана: «Эс поэт», — терĕ. 1955 çулта ман икĕ сăвва «Тăван Атăл» журналта пичетлесе хăварчĕ».

Кун çумне çакна хушса калама юрать: чăнах та, хăй вăхăтĕнче Шупашкарти музтехникумăн 1929—1930-мĕш вĕренӳ çулĕнчи концерчĕсене хакласа çырнă май



В. ИСАЕВ сăнӳкерчĕкĕ.

Федор Павлов Ираида Петрова сцена çинче илемлĕ те хăюллă юрлама пултарнине палăртнă.

Поэтессăмăр малтан хăйĕн лирика сăввисемпе ят илчĕ. «Пурнăç çиппи» кĕнекине (1979 ç.) гражданла лирикăпа юрату сăввисем кĕнĕ. Вĕсенче авторăн тĕп туртăмĕсем сисĕнеççĕ. Кĕнекери сăвăсенчен чылайăшне çирĕм çулсем каяллах çырнă. Ун чухне интимлă лирика хисепре пулманнипе автора поэзие килсе кĕме, ытларах пичетленме хĕн пулнă. Çакна 1955 çулта Николай Данилов тĕпчевçĕ хăйĕн кун кĕнекинче çырса хăварни лайăх ĕнентерет. Вăл çапла пĕлтерет:

«Çав кунах (мартăн 10-мĕшĕнче) каçхине çамрăк писательсен пухăвĕнче тепĕр тĕлĕнтерекен ĕç, халĕ ĕнтĕ савăнтараканни, пулса иртрĕ. Мускавран килнĕ çамрăк мар хĕрарăм Ираида Петрова ытарайми çепĕç, чуна вут хыптарса хĕпĕртеттерекен сăвăсем вуласа кăтартрĕ. Сăввисене итленĕ чухнех — чăваш халăхĕн те А. Ахматова йышши сăвăçсем тупăнчĕç иккен! — тенĕ пек туйăнса ларчĕ. Анчах вăл чăннипех ĕлĕкхи Ахматова пек-ши? Çынсем, чăн та ĕнтĕ, И. Петрова та, Ахматова пекех, шухăшĕ-туйăмĕ халăхăннинчен уйрăлса кайнă теме, вĕсем пĕчĕк ушкăна çеç интереслентерме пултараççĕ , совет çыннин ун йышши шухăш-туйăм пулма пултараймасть теме пултараççĕ. А. Алка çавăн пек хакласа калама тытăнчĕ те. Куммипе ураççи пирки çырнă сăвă çинчен вăл: ку — хĕрарăм упăшкине пĕтĕм чун-чĕрипе юратса пăрахнине палăртакан, пирĕншĕн килĕшӳсĕр сăвă! — терĕ. Çамрăксем пурте ун шухăшĕпе килĕшрĕç. Маншăн пулсан, çук, килĕшес килмест. Миттапа Петĕр Хусанкай та ман пекех шухăшлаççĕ пулас».

И. Петрова, ытти хĕрӳллĕ патриот пекех, тăван çĕршыв илемне сăнларĕ, вăрçа сивлерĕ, миршĕн кĕрешекенсемпе ĕç паттăрĕсенчен ырă тĕслĕх илме йыхăрчĕ.

Ĕçсе тăранаймасть çерем
Ирхи çут сывлăма.
Курса тăранаймастăп
Тăван çĕршывăма, —

тет сăвăç халăх юррисен еккипе. Çакă ăна кăмăл-туйăма çепĕçрех калама май парать. Авторăн чун çĕкленĕвĕ юрă пек янăраса тăни пĕр çавраранах курăнать:

Ман Атăлăм,
Ман Атăлăм,
Ман халăхăн сăпки.
Ман Атăлăм,
Ман Атăлăм,
Хастар чĕре таппи.

И. Петрова сăввисенче уйрăм çыннăн интимлă пурнăçĕ гражданла кĕвĕсемпе пĕтĕçсе тăрать, ку вара шухăша çивĕчрех те илемлĕрех пĕлтерме пулăшать. Ахальтен мар В. Г. Белинский çапла каланă: хĕрарăм поэзире арçын курман-асăрхаман тĕрлĕрен сĕме-ене кăтартма пултарать, тенĕ. Хĕрарăм — сăвăç хăйĕн кулленхи ĕç-пуç уйрăмлăхсене кура тĕнче çине хăйĕн ĕçĕхĕлĕ витĕр пăхать. «Мир çинчен» сăвăра ку тĕлĕшрен поэтесса вăрçăсăр пурнăça акă мĕнле хаклать:

Тăнăç кун-çул — савăшпа юрату,
Тăнăç кун-çул — ман тута, сан туту.
Тăнăç кун-çул — хĕвеллĕх сăпки вăл,
Çав сăпкари санпала манăн ывăл.

Ачаран юрлама юратни, каярах ун ăсталăхне вĕренни И. Петрова поэзине илемлĕх парса тăрать. Çакна унăн юрату лирики лайăх ĕнентерет. Автор юрă-романса ăсталăх ĕнчи вырăнне хурать, хăй пултарулăхĕн çăлкуçĕ тесе шутлать, пĕчĕк калăплă хайлав вичкĕнлĕхне юрататъ. «Хура ĕнчĕ» ярăмри чылай сăввăн кĕвви халăх юррисене çывăх. Вĕсенче фольклор пекех ытарлăхпа, сасăсен вылявĕпе ăста усă курнă:

Хура ӗнчӗ, хура ӗнчӗ,
Хура ӗнчӗ хурлӑхан
Хӑтаринччӗ, хӑтаринччӗ,
Хӑтаринччӗ хурлӑхран.

И. Петрова сӑввисем кӗске те ансат. Унта лирика геройӗ ҫутҫанталӑкран уйрӑлми: таврари мӗн пур япала ӑна пурнӑҫ ҫинчен шухӑша путма чӗртсе тӑрать. Автор сӑмахӗ анлӑ параллелизмран е танлаштаруран этем шӑпи ҫине куҫнине вулакан сиссе те юлаймасть:

Тӑп-тӑрӑ ҫӑл эс.
Санӑн шерпетне
Ӗҫсе тӑранас ҫук эп
Ӗмӗрне.

Поэтесса хӑйӗн пӑлханчӑк кӑмӑлне ирӗккӗн те хӑйхаллӗн систерет. Ун лирикин тӗп геройӗ — хӑюллӑ хӗрарӑм: вӑл ачашшӑн пӑшӑлтатма та, арҫын пек хастаррӑн калаҫма та пултарать, хӑй хакне туять, хӑй танлӑхӗшӗн ҫирӗп тӑрать, хӗв шухӑшне пӗлтерме те вӑтанмасть. Кусем вӗсем — хальхи паллисем, ҫакӑ вӑл паянхи пурнӑҫпа та, ытти культура тӗслӗхӗпе те чӗрӗлнӗ.

Лирикӑри асӑннӑ туртӑм И. Петрован пысӑкрах калӑплӑ хӑйлавӗнче «кун-ҫул юппинче» («Телейпе Илем») трагедире вӑйлӑрах. Ирӗклӗхшӗн кӗрешекенсем хӑйсен пурнӑҫне те шеллемеҫҫӗ. Арҫынсемпе юнашар кунта паттӑр чунлӑ Илем пикене куратпӑр. Ӗҫсем пин ҫул ӗлӗкрех пулса иртеҫҫӗ. Чӑвашсен мӑн аслашшӗсем хӑйсем пӗтме пултарас хӑрушлӑх умӗнче те ют тӗне йышӑнасшӑн мар. Илем сӑнарне ҫӗклекен тепӗр паха ен вӑл — сӑвар-чӑваш хӗрӗ сӑвӑ-юрӑ хайлама хастарлӑх кӑтартни. Ку вӑл пире тӑван халӑх пултарулӑхне шанса тӑма ҫирӗплӗх кӳрет.

Трагедие 922 ҫулта Багдадран Атӑл ҫи Пӑлхар патшалӑхне ислам тӗнне кӗртме килнӗ элчӗлӗх ҫыруҫи Ахмед ибн-Фадлан кӗнеки тӑрӑх ҫырнӑ. Ун чӗлхи ҫивӗч те янӑравлӑ, писӗ те сӑнарлӑ. Лирика ҫаврӑмӗсемпе ҫепӗҫ юрӑ-сӑвӑ сӑнарсене чӗрӗрех кӑтартать. Ку хайлав — тӑван халӑх историне хисеплеме чӗнекен ырӑ тӗслӗх.

Ахмед ибн — Фадлан кӗнекинче те, «Ҫул юппинче» те кӑнтӑрти тӗрлӗ халӑх сутуҫисем, вӗсемпе пӗрле тарҫи-тӗрҫи те, ҫав шутра Инди ҫынни те Атӑл ҫи Пӑлхара ҫитнине асӑннӑччӗ. Поэтесса ҫак материалпа хӑйне евӗр сюжет йӗркелет те Атӑл хӗрӗпе Инди йӗкӗчӗн юратӑвӗ ҫинчен «Савпипе Кришна» юмах ярса кӑтартать, ӑна халӑхсен социаллӑ кӗрешӗвӗпе ҫыхӑнтарать. Кунта истори факчӗсемпе юмах элеменчӗсем тачӗ пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ. Апла пулин те, юмахри ӗҫ-пулӑма чӑн пулнӑ пек йышӑнатӑн.

Тӗрлӗ халӑх ӗҫ ҫыннисен туслӑхӗ ӗлӗкренпех ҫирӗп тымар янине трагедире те, ку юмахра та ҫивӗччӗн ӳкерсе панӑ, ҫавӑнпа вӗсен пӗлтерӗшӗ татах пысӑк.

Поэтесса уйрӑмах чӑваш хӗрарӑмӗн иртнӗ кунҫулӗ ҫинчен ҫырма, ун хастарлӑхне сӑнлама тимлерӗ. Ҫакна эпир унӑн сӑввисенче те, трагедипе юмахӗнче те куртӑмӑр. «Татюк» повесть пире Совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсенчи тӑлӑх чӑваш хӗрачин пурнӑҫӗпе паллаштарать. Ача-пӑча вӑййи-куллипе пӗрлех кунта унӑн хуйхи-суйхине те ҫырса кӑтартнӑ, ҫӗнӗ самана пурнӑҫа ҫӗнӗ сывлӑш вӗрсе кӗртни те лайӑх сисӗнет. Автор ача-пӑча психологине, халӑх йӑли-йӗркине тӗплӗ пӗлни пур ҫӗрте те палӑрать. Кӗнеке сӑвӑ-юрӑпа та пуян.

Сӑвӑҫ калавсем, очерксем, статьясем те ҫырчӗ. Вӗсенче иртнӗ вӑрҫӑ кунӗсене асилнӗ («1943, Бекетовка, Сталинград»), ҫамрӑк ӑрӑва тӗрӗс вӗрентсе ӳстерес ыйтӑва хускатнӑ («Ҫӑлтӑр — юр пӗрчи») т. ыт. те. Кунта та сӑнарлӑ сӑмах хӗрӳлӗхне туятпӑр. Вӑл маларах асӑннӑ «Ман асӑмри Митта» асилӳ сыпӑкӗнчех сисӗнсе тӑратчӗ. Ҫыравҫӑ хӑйлавӗсене вырӑсла, тутарла, пушкӑртла куҫарнӑ, ку ӗҫе автор хӑй те вӑй хучӗ. Унӑн вырӑсла ҫырнӑ хӑйлавсем те пур.

«Пӗчӗк юрӑ кӑна пулса юласчӗ халӑх асӗнче», — тесе ӗмӗтленнӗччӗ И. Петрова. Ӗнтӗ халӗ ҫапла пӗтӗмлетме май пур: поэтесса ӗмӗчӗ ҫитрӗ, ун кунҫулӗ тӑван культурӑра пӗчӗк юрӑ пулса кӑна мар, ытларахӑн та йӗрленсе юлма шанчӑк пур. Ахальтен мар унӑн трагедийӗ тӑван театр сцени ҫинче нумай вӑхӑт пычӗ. Вӑл тӑван литературӑмӑрта халӑх историйӗн чиккисене сумлӑн сарчӗ, вулакансем те, унта пурнӑҫа авалхи грексен трагедийӗсенчи пек мӑнаҫлӑн те чӗррӗн сӑнланине курса куҫҫуль капланиччен пӑлханса вулаҫҫӗ. И. Петрован ытти хӑйлавӗсем те ҫивӗчлӗхпе, илемлӗхпе илӗртеҫҫӗ. Сӑвӑҫ ӳкерсе кӑтартнӑ хастар чӑваш хӗрарӑмӗсен сӑнарӗсем ҫирӗп те пысӑк чунлӑ пулма йыхӑраҫҫӗ. Ку вӑл, паллах, автор чӗри те хастарлӑ тапнинчен килет. Тайма пуҫ ӑна тӑван халӑхӑн чун пахалӑхне ҫапла маттур кӑтартнӑшӑн.

Геннадий ЮМАРТ.